Гороскоп

# Вăкăр çулĕ пысăк майсем туса парĕ

***2009 çулта планетăсен вырнаçăвĕ тĕнче улшăнма пуçлассине кăтартса парать. Çынсен те вăхăтпа тан утма тивĕ.***

***Вăкăр çулĕ çĕнĕ шухăшсем, плансем илсе килĕ. Малашлăх мĕнле пулассине те кăтартма пултарĕ. Çитес çул юлташлă çыхăнусем пысăк вырăн йышăнĕç. Ыр кăмăллăх организацийĕсем çĕнĕрен чĕрĕлсе тăма пултараççĕ. Коллективлă пуçарусем те ăнăçлă пулĕç.***

**СУРĂХ** ирĕклĕн сывласа яма пултарĕ. Шăпах хăвăрăн ăс-тăнна тата тавçăрулăха кăтартмалли çул. Ку таранччен мĕнпе те пулин интересленнине халĕ ĕçпе çирĕплетсе пама вăхăт. Хăвăрăн шăпана тӳрлетме те пултаратăр. Анчах та активлăхпа тата çине тăнипе палăратăр пулсан çеç. Çулталăк тăршшĕпех малаллахи плансем тата проектсем пирки шутлама тивĕ. Малтанхи çитĕнӳсемпе киленсе пурăнни вара ура хума пултарать.

**ВĂКĂР** хăйĕн тĕллевĕсене тинех пурнăçлĕ. Ĕçре те çитĕнӳсем тума майсем пайтах пулĕç. Тен, çĕнĕ профессие те алла илĕр. Çав хушăрах ачасемпе, çемьепе тата тăвансемпе çыхăннă проблемăсене те вăраха тăсмасăр татса памалла пулать. Пĕтĕм вăя хунипе çеç палăртнă тĕллевсене ĕçе кĕртме пултаратăр. Çитес çул чăннипех пулăшу кирлĕ çынсене тата сирĕн ыр кăмăллăхпа усă куракансене пĕр-пĕринчен уйăрма вĕренмелле. Юнашаррисен чунĕсене ыраттармасăр «çук» тесе калама пĕлмелле. Çакна çулталăкĕпех хăвăр çинче тĕрĕслесе пăхмалла пулĕ.

**ЙĔКĔРЕШСЕМ** çитес çул хăйсене мĕн кирлĕ çавăн çинчен ĕмĕтленме пултараççĕ анчах мар, ĕмĕтсене пурнăçлама та майсем тупĕç. Анчах та çак утăмсене тума йăлана кĕнĕ виçеллĕ пурнăç йĕркипе, пĕр пеклĕхпе тата наянлăхпа килĕшмелле мар. Хирĕçле – питĕ активлă пулмалла. Çак улшăну пулсан вара сире шăпа лайăх парнесем хатĕрлесе парĕ. Шухăшсемпе тĕллевсене сире пăхăнакансен ретне сарасси çине ямалла пулĕ. Тата кăшт вĕренсе ăс пухсан тĕнче сирĕн ура айĕнчех пулмалла. Йĕкĕрешсенчен нумайăшĕ чикĕ леш енчи тĕрлĕ кӳлĕсем хĕррине канма та кайĕ.

**РАК** çĕнĕ çулта хăйĕн пурнăçне самаях улăштарма пултарĕ. Сирĕн пурнăçри пулăмсен сăлтавĕсене çине тăрса, парăнмасăр шыраса тупмалла. Çитес çул сирĕн ытти çынсен проблемисене татса парассинче те нумай вăй хума тивĕ. Хăшĕ-пĕрине партнерсен пурнăçĕ, вĕсен ĕçĕсем канăç та памĕç. Çакăн пек лару-тăру çулталăк тăршшĕпех ан пултăр тесен яланхи ответлăх тата тивĕççене пурнăçласси çӳллĕ шайра пулни ытлашши пулма та пултарать.

**АРĂСЛАНĂН** çитес çул çĕнĕ тĕл пулусем нумай пулĕç. Хĕвел айĕнчи вырăншăн вара хăвăрăнах тупăшмалла пулĕ, тепĕр çын çине шанмалла мар. Çĕнĕ çул шăпа темиçе хутах эсир хăвăр шухăшсене хӳтĕлеме пултарнине тĕрĕслĕ. Хăвăршăн кăна çунни, хăвăрăн интерессене çеç шута хуни, хаярлăх тата кутăнлăх сире нумай çынсенчен сивĕтме, пĕччен тăратса хăварма пултарĕç. Йышăнусем тунă чух унталла-кунталла нумай шутласа тăнине те ырламĕç.

**ХĔРĔН** пурнăçĕнчи улшăнусем пуçланас умĕнхи çул пулĕ Вăкăр çулĕ. Çавăнпа та эсир вĕсем валли хатĕр пулнине шăпа çулталăкĕпех тĕрĕслĕ. Паянхи кунпа, çак сехетпе туллин пурăнма тăрăшăр. Çакна пăхăнни пысăк результатсем тата ăнăçу патне илсе çитерĕ. Космос вара сире 100 процент таран шанчăк çук ĕçсенчен, ыйтусенчен тата çынсенчен пăрăнма сĕнет. Хăвăрăн вăя кулленхи ыйтусене татса парас ĕçе хумалла пулать, мĕншĕн тесен унта вак-тĕвек тени пулмасть.

**ТАРАСАСЕН** пурнăçĕнчи пулăмсем пур чухне те килĕшмелле вĕçленмеççĕ пулин те, выляса пурăнма вĕренмелле пулĕ. Нумайăшĕн творчествăлла активлăх, çĕнĕ шухăшсем çуралĕç. Çитес çул ку таранччен туса çитереймен ĕçсене вĕçлес енĕпе ăнăçлă пулать. Чун-чĕре мĕн ыйтнине пурнăçлама тăрăшăр, çакăнпа хăвăра савăнтаратăр çеç.



Творчествăлла профессиллĕ Тарасасен талантне ыттисем те хаклĕç. Çитес çул Тарасасемшĕн индивидуаллăха уçса памалли çул пулĕ. Ачасем тата ашшĕ-амăшĕсем темăпа çыхăннисен умне çăлтăрсем ыйтусене экзаменри пекех кăларса тăратĕç.

**СКОРПИОНСЕН** Вăкăр çулĕнче çемьепе çыхăннă ыйтусем çине пысăк тимлĕх уйăрмалла пулĕ. Пĕччен пурăннисен вара çемье çавăрмалли çинчен шутлама вăхăт. Анчах ку ыйту çăмăллисен шутĕнче пулмĕ. Шăпа сирĕнтен пуçарулăх, хăвăр тĕллĕн ыйтусем татса пама пултарнине тата хăюлăх ыйтĕ. Пурнăçра тӳрлетмелли самантсем пур пулсан, вĕсене шăпах тӳрлетме тата çĕнĕлĕхсене кĕртме вăхăт. Вĕсене тăсмалла мар, мĕншĕн тесен çаксем çемьери телее тупма пулăшĕç.

**УХĂÇĂСЕМ** валли çывхарса килекен çул çĕнĕ сукмаксем хатĕрлет. Вĕсем çĕнĕ хуласемпе çĕр-шывсене çеç мар, çĕнĕ ăс-тăн тата майсем патне те илсе çитерĕç. Маларах «хатĕрленĕ» потенциалпа усă курма тивĕ. Сире нумай вăй-хал тата çирĕплĕх кăтартмалли çĕнĕ сĕнӳсем парĕç. Пурнăçăрта нимĕн те улăштарас мар тесе эсир теме те хирĕçлеме пултаратăр. Анчах малашне те хăнăхнă йĕркепе пурăнасси сире улталама пултарни çинчен асрах тытмалла.

**ТУ КАЧАКИСЕНЕ** те çитес çул активлăх, çирĕплĕх тата никама пăхăнманлăх енĕпе тĕрĕслет. Камăн пурнăçĕ юнашар çынсенчен сахал мар килет е вĕсен проблемисемпе тачă çыхăннă, çакнашкал Ту качакисене космос аталану çулĕ çине кăларать. Çӳллĕрех шая çĕкленме майсем туса парать. Амăшĕн çунатти айĕнче е юлташăн çурăмĕ хыçĕнче пытанмалли вăхăтсем иртсе каяççĕ. «Пурнăç – пĕр вĕçĕм çĕнĕлĕх» девизпа пурăнсан çеç сире ăнăçусем кĕтеççĕ. Анчах та сирĕн ăнăçусем тăвасси ыттисен пурнăçне ан çĕмĕртĕр.

Малтан хăйсене уçса паман ĕçсенче **ШЫВ ТĂКАНА** тинех çитĕнӳсем кĕтеççĕ. Хăвăрăн вăй çине шанма тивет, ăна шутласа хурса усă курмалла. Партнерла хутшăнусен теми çулталăкĕпех çивĕч пулĕ. Хăвăр çинчен анлăрах пĕлтернипе çитес çул эсир юнашаррисен чунчĕрисене те çавăрса илме пултаратăр. Ертӳçĕ пулма хăрамалла мар. Сирĕн ыр кăмăллă тĕллевсене тĕрĕс хак парĕç. Тухса тăракан ыйтусене вара майне пĕлсе тата çаврăнăçулăхпа татса памалла.

**ПУЛĂСЕМ** валли çитес çул çăмăллисен шутĕнчех пулмĕ. Çав хушăрах вара вăл питĕ интереслĕ иртĕ. Çын çăкăрпа кăна тутă пулманнине хăйсен куçĕпе курса ĕненме тивĕ. Хăш-пĕр хаклăлăхсемпе шухăш-кăмăлсене те улăштарма тивĕ. Чĕре сисни тата туйăмсем вăйланни ытларах палăрма тытăнĕ. Япаласене тата пулăмсене курса вĕсене тĕрĕс ăнланма пĕлни çитес çулти тĕп задачăсенчен пĕри пулĕ. Информацие тĕрĕс суйласа илесси, пурнăçри ыйтусене татса парасси те çакăнтанах килет.

Çĕнĕ çулти спорт хыпарĕсем

## Шашка-шахмат

**Январĕн 8–9-мĕшĕсенче** районти пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командисем хушшинче шашкăлла тата шахматла выляссипе ăмăртусем иртеççĕ. Вĕсем 9 сехетре пуçланаççĕ, район администрацийĕн методика кабинетĕнче иртеççĕ. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен командисем январĕн 8-мĕшĕнче, вăтам шкулсен командисем январĕн 9-мĕшĕнче вăй виçеççĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен командисенче 2 яшпа 1 хĕр, представитель пулмалла. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсен командисенче – кĕçĕн ушкăнсенче 2 яшпа 1 хĕр, аслă ушкăнсенче 2 яшпа 1 хĕр тата представитель.

Мала тухнă командăсем район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн дипломĕсемпе асăнмалăх парнисене тивĕçеççĕ, мала тухнă уйрăм участниксене грамотăсемпе парнесем параççĕ.

## «Атте, анне, тата эпĕ...»

**Январĕн 9-мĕшĕнче** Муркашри «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче 11 сехетре районти спорт çемйисем хушшинче шывра ишсе мала тухассипе ăмăртусем иртеççĕ. Вĕсен тĕллевĕ – çынсене, вăл шутра ачасене те, физкультурăпа тата спортпа туслă пулма хăнăхтарасси, сывă пурнăç йĕркине пропагандăласси, çемье хутшăнăвĕсене çирĕплетесси.

Çемье командисенче ашшĕпе амăшĕсĕр пуçне 14 çула çитмен ачи пулмалла. Ашшĕсем 50 метр, амăшĕсемпе ачисем 25-шер метр ишеççĕ.

Мала тухнă командăсем район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн парнисемпе грамотисене тивĕçеççĕ.

Ăмăртăва хутшăнма пурин те купальник, плавки, пуçа тăхăнмалли калпак, сланцы, ал шăлли, мунчара кирлĕ хатĕрсем пулмалла.

## Тăваттăшĕнчен хăшĕ вăйлăраххи?

**Январĕн 10-мĕшĕнче** волейболла выляссипе районти чи вăйлă 4 команда вăй виçет. Ăмăрту Муркашри «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче пулать, 10 сехетре пуçланать. Командăра 9 участник тата 1 представитель пулмалла. Мала тухнă командăна дипломпа куçса çӳрекен кубок, хыççăнхи вырăнсене тивĕçнисене дипломсем параççĕ.

**Хамăр инф.**


Пĕлтерӳсем. Объявления

ИП КОЛЕСНИКОВ ДИМИТРИЙ НИКОЛАЕВИЧ
ИНН211202873675 ОРГНИП 308213613700028
Адрес: 429530, ЧР, МОРГАУШСКИЙ РАЙОН,
С. МОРГАУШИ, УЛ. ГАГАРИНА, Д. 2
ТЕЛ. 8 83541 2-21-42; 8 903 476 81 14; 8 906 385 12 38
БУХГАЛТЕРСКИЕ УСЛУГИ

**Предлагает свои услуги:**
- **Составление бухгалтерской и налоговой отчетности;**
- **Составление деклараций, в т.ч. декларации на имущественные и социальные вычеты;**
- **Передача отчетности через Интернет в Налоговую Инспекцию и Пенсионный Фонд;**
- **Восстановление и ведение бухгалтерского и налогового учета;**
- **Ведение кадрового делопроизводства;**
- **Подготовка и распечатка платежных поручений, квитанций, объявлений на взнос наличным…;**
- **Составление любых видов справок, заявлений и писем;**
- **Услуги ксерокса.**

**Мы ждем вас с 8-00 до 17-00 часов ежедневно кроме субботы и воскресенья.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 5-5.**

**Стальные двери, межкомнатные, пластиковые окна с установкой, гарантией. Новогодние скидки. Тел.: 8-927-841-67-31. 5-5.**

**КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 5-13.**

**Продаю навоз 500 руб. за одну тонну. Погрузка своя. Тел.: 8-905-027-73-47. 1-2.**

**Спутниковое телевидение от 3500 рублей, тел.: 8-927-666-93-95. Спутниковый интернет. 14-20.**

**Виççĕ пăрулană хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Февраль вĕçĕнче пăруламалла. Ятман ялĕ, Мир урамĕ, 13-мĕш çурт. Тел.: 8-927-993-66-42.**

**Спутниковые антены от 3000 руб. Триколор 6200 руб. Тел.: 8-906-385-29-30. 3-5.**


### К сведению абонентов местной телефонной сети Моргаушского района Кугесьского МУЭС филиала в ЧР ОАО «ВолгаТелеком»

В связи с вводом в эксплуатацию цифровых АТС в населенных пунктах Юнгинского,Ильинского, Шешкарского,Б.Сундырского,Ярославского ,Ярабайкасинского сельских поселений - переключение абонентов на новые АТС с изменением абонентских номеров.

Выход на автоматическую междугородную сеть для всех абонентов новых АТС осуществляется набором индекса – «8».

Выход на автоматическую международную сеть для абонентов новых АТС осуществляется набором – «8 + 10+ код страны + код города + номер телефона».

Выход по району для абонентов вышеуказанных сельских АТС без набора индекса –«0».

Сведения о нумерации АТС:

| Наименование АТС | Существующая нумерация | Нумерация после переключения |
|---|---|---|
| Юнгинская АТС | 32 (2-00 - 3-99) | 69 ( 7-00 - 8-59 ) |
| Б.Карачкинская АТС | 47 (2-00 - 2-99) | 66 ( 5-00 - 5-63 ) |
| Тренькинская АТС | 31 (2-00 - 3-99) | 66 ( 7-00 - 8-59 ) |
| Акрамовская АТС | 63 (2-00 - 2-95) | 67 ( 5-00 - 5-95 ) |
| Б.Сундырская АТС | 52 (1-00 - 5-99) | 69 ( 1-00 - 4-79 ) |
| Ярославская АТС | 43 (2-00 - 2-99) | 64 ( 7-00 - 7-95 ) |
| Моргаушская АТС | 21 (0-00 - 9-99) | 62 ( 0-00 - 9-99 ) |
| Моргаушская АТС | 22 (1-00 - 5-99) | 63 ( 0-00 - 5-99 ) |

Примечание: Б.Сундырская АТС переключение с 25 декабря 2008 года;

Моргаушская АТС переключение с 14 января 2009 года

Нумерация на новых сельских станциях района меняется с ***трехзначной*** на ***пятизначную***.

Об изменении номера телефона абоненты будут уведомлены индивидуально.

Справки по телефонам: 2-11-70, 2-15-60 - круглосуточно; 2-19-65, 09 - ежедневно с 08-00 до 20-00.

Администрация филиала в Чувашской Республике ОАО «ВолгаТелеком» приносит абонентам свои извинения за временные неудобства.

**Администрация ЛТУ Моргаушского района.**


**КПКГ «Заря-Кредит» принимает сбережения от пайщиков на выгодных условиях по адресу: остановка Москакасы, здание «Автомиг», 2 этаж. Тел.: 66-2-16, 8-937-370-23-69. 10-11.**


Коллектив МОУ «Орининская СОШ» выражает глубокое соболезнование учителю истории Алексеевой В.И. и учителю физкультуры Алексееву С.И. в связи с кончиной отца
**ТИХОНОВА
Ивана Семеновича.**

**Хаçатăн çитес номерĕ январĕн 14-мĕшĕнче тухать.**


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 30.12.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3820.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.